86-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 СЕНТЯБРЬ 28 ЫТЛАРИКУН 193(6430) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Октябрь уявне çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илер

Совет çыннисем халĕ пĕр туйăмпа — фронта кунран кун ытларах пулăшса тăрас патриотла туйăмпа ĕçлесе пурăнаççĕ. Çакна эпир промышленность предприятийĕсен, чугун çул транспорчĕн, колхозсемпе совхозсен тата учрежденисен кулленхи ĕçĕнче курса тăратпăр. Кашни кун совет патриочĕсем çĕнĕ çитĕнӳсем туни çинчен хыпарсем илсе килет.

Промышленноçри тата транспортри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем, служащисем, фронта пулăшассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлесе, производство планĕсене ирттерсе тултараççĕ, продукци кăларассине ӳстерсе пыраççĕ. Республикăри нумай предприятисем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти вырăна тухрĕç. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне, Çĕмĕрлери «Большевик» завод коллективĕ ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Кусла́вкка комбиначĕн, Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводăн коллективĕсем август уйăхĕнче Пĕтĕм Союзри ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн виççĕмĕш премине илнĕ. Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ те хăйĕн ĕçне лайăхлатсах пырать. Нумай промартельсемпе предприятисем çулталăкри производство планне срокчен тултараççĕ.

Республикăри колхозсенче ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн, колхоз фермисенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çĕклессишĕн кĕрешӳ пырать. Пирĕн Чăваш республики выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çулталăкри плана тултарнă, сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вĕçленĕ, кĕрхи тырăсене акса пĕтернĕ. Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт парассишĕн районсем хушшинче пуçланнă ăмăртура малта пыракан Етĕрне, Вăрнар районĕсем государствăна тырă парса татрĕç. Шупашкар районĕнчи колхозсем те государствăна тырă парас ĕçе ăнăçлăн туса пыраççĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртнĕ колхозсем çĕршерĕн шутланаççĕ.

Республикăри промышленность тата ялхуçалăхĕ тунă çитĕнӳсенче эпир социализмлă ăмăртăвăн паха çимĕçĕсене куратпăр. Социализмлă ăмăрту çулран çул анлăн сарăлса пырать. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче вăл тата та хăватлăн сарăлса, Хĕрлĕ Çар валли мĕн кирлине пурне те парса тăма майсем туса пачĕ. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн совет халăхĕ кирек мĕнле задачăна пурнăçа кĕртнĕ чухне те социализмлă ăмăрту тата стахановла юхăмăн меточĕсемпе анлăн усă курать.

Октябрь уявĕ çывхарса килнĕ май республикăри предприятисемпе колхозсенче уяв умĕнхи ăмăрту хăватлăн сарăлса пырать. Предприяти коллективĕсем, колхозниксемпе колхозницăсем чаплă уява çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме пулса обязательствăсем йышăнаççĕ. Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ Октябрь уявĕ тĕлне 4-мĕш кварталти плана тултарма пулнă. Шăхасанти райпромкомбинат уяв тĕлне çулталăкри плана тултарса çитерме сăмах панă. Нумай артельсем уява планран ирттерсе вуншар пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнипе кĕтсе илме пулаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем аслă уява уйхир ĕçĕсене йăлтах вĕçленипе, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртнипе кĕтсе илессишĕн тăрăшаççĕ.

Паянхи хисеплĕ ĕç вăл—Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те анлăн сарса, умра тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси пулать.

Республика умĕнче сахал мар ответлă задачăсем тăраççĕ. Промышленноçăн продукци туса кăларассине ӳстерсех пымалла. Çакна тума предприятисемпе хуçалăх организаци руководителĕсен тата партипе профсоюз, комсомол организацисен социализмлă ăмăртăва сарса пымалла, производствăри ĕçе тĕрĕс организацилемелле. Çĕнĕ ĕç меточĕсене анлăн сарса пымалла, рабочисене техникăна алла илме пулăшмалла тата тухăçлăн ĕçлеме условисем туса памалла. Предприятисем хĕллехи вăхăтра та лайăх ĕçлесси—хĕллене тĕплĕн хатĕрленнинчен килет. Çавăнпа ĕнтĕ хĕллене хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пур çĕрте те халех вĕçлемелле.

Республикăри колхозсем те çак çывăх вăхăтра нумай пысăк ĕçсене пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ. Вĕсен ялхуçалăхĕнчи уйхир ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлесе çитермелле, государствăна тырпул тăратас плана тултармалла, выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленмелле. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обком бюровĕ йышăннă тăрăх республикăра сентябрĕн 25-мĕшĕпе октябрĕн 25-мĕшĕ хушшинче фронтовой уйăхлăх иртет. Фронтовой уйăхлăхра фронтри пек ĕçлемелле. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен тата çĕрĕç работникĕсен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантарулă ĕçе анлăн сармалла, вĕсене пурне те уйăхлăха хутшăнтармалла, уяв умĕнхи ăмăртăва явăçтармалла.

Социализмлă ăмăртăвăн вăйĕ—вăл массăллăн сарăлса пынинче. Партипе совет тата профсоюз организацисен уяв умĕнхи ăмăртăва организациленĕ чухне çавна ялан асра тытмалла. Ăмăртура малта пыракансене çиĕнчех палăртса, вĕсен опычĕсене сармалла. Кая юлакансене кулленхи ĕçре пулăшса пымалла. Социализмлă ăмăртăва организацилес тĕлĕшпе пирĕн пысăк опытсем пур. Вăл опытсемпе туллин усă курмалла.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырар, уява çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илер!

ĔÇСЫННИ ДЕПУТАТЧĔСЕН РАЙСОВЕТ ИСПОЛКОМĔСЕМ ТАТА ВКП(б) РАЙКОМĔСЕМ ТĂРАТНĂ ТĂРĂХ, УБОРКА ВĂХĂТĔНЧЕ ТУХĂÇЛĂН ТАТА ЛАЙĂХ ĔÇЛЕНĔШĔН, ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂШĂН ЯЛХУÇАЛĂХĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ ХИСЕП ХĂМИ ÇИНЕ ÇАК КОЛХОЗСЕНЕ КĔРТНĔ:

1. Октябрьски районри **«Молния» колхоз** (колхоз председателĕ **Иванов** юлташ). Колхоз тĕштырăсене кĕске срокра пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана тултарнă. Колхоз çĕр улмине, пахча-çимĕçсене кăларса пĕтернĕ, çав культурăсене государствăна памалли обязательствăсене парса татнă.

2. Октябрьски районри **«Заря» колхоз** (колхоз председателĕ **Тихонов** юлташ). Ку колхоз тырăсене кĕске срокра тата лайăх пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă. Колхоз сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне çĕр улмине кăларса пĕтернĕ, пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕртнĕ, çав культурăсене государствăна памалли плана тата тултарнă. Кĕрхи çĕртме тумалли плана 52 процент пурнăçланă.

3. Октябрьски районри **«Венера» колхоз** (колхоз председателĕ **Прокопьев** юлташ). Ку колхоз тырăсене кĕске срокра пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана тултарнă. Колхоз çĕр улмипе пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕртнĕ, çав культурăсене государствăна памалли обязательствăсене парса татнă. Кĕрхи çĕртме тумалли плана 48 процент пурнăçланă.

4. Вăрмар районĕнчи **«Красные Мураты» колхов** (колхоз председателĕ **Илларионов** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Никитин** юлташ). Колхоз кĕрхипе çурхи культурăсене планра кăтартнă 16 кун вырăнне 13 кун хушшинче пухса кĕртнĕ. Колхоз сентябрĕн 4-мĕшĕнче авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана çĕр процентпех тултарнă.

5. Вăрмар районĕнчи **Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Ефремов** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Кораблева** юлташ). Колхоз тырпулсене планра кăтартнă 14 кун вырăнне 13 кун хушшинче пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 17-мĕшĕнче авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли обязательствăсене парса татнă.

6. Вăрмар районĕнчи **«Заря» колхоз** (колхоз председателĕ **Ивлев** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Новосильцев** юлташ). Колхоз кĕрхи тырăсене 4 кун хушшинче, çуртрисене 7 кун хушшинче пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли обязательствăсене парса татнă. Колхоз халь МТС ĕçĕшĕн натуроплата шучĕпе 1944 çулшăн тырă парать.

7. Вăрмар районĕнчи **«Атнаш» колхоз** (колхоз председателĕ **Матвеев** юлташ). Колхоз тырпулсене кĕске срокра пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана çĕр процентпех тултарнă. Кĕрхи тырăсене кĕске срокра акса хăварнă, пĕтĕм тырра рядовой сеялкăпа акнă.

8. Вăрмар районĕнчи **«Парижская Коммуна» колхоз** (колхоз председателĕ **Никифоров** юлташ). Колхоз тырпулсене кĕске срокра пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана çĕр процентпех тултарнă.

ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче

Çамрăк сухаçăсемпе трактористсен ВЛКСМ XXV çул тултарнă ятпа пулса иртекен ăмăртăвĕ

Нумай колхозсенчи, совхозсенчи тата МТС-сенчи çамрăксем ВЛКСМ XXV çул тултарнă ятпа кĕрхи çĕртмене хăвăртрах туса пĕтерессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Мускав облаçĕнчи Ленински МТС-ри Мария Белоусовăн трактор бригадинчи трактористкăсем ВЛКСМ XXV çул тултарнă ятпа стахановла вахта пуçласа янă. Вĕсем октябрĕн 29-мĕшĕччен кашни 15 вăйлă тракторпа 120-шер гектар кĕрхи çĕртме тума сăмах панă. Тамбов облаçĕнчи колхозсемпе совхозсенче комсомолецсемпе çамрăк сухаçăсен бригадисене тăваççĕ. Çав бригадăсен тĕлевĕ — кашни лаша пуçне 15 гектартан кая мар кĕрхи çĕртме тăвасси пулса тăрать. Курск облаçĕнчи Обоянь районĕнче, комсомолецсем пуçарса янипе, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре майракаллă шултăра выльăхпа усă курма пуçланă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, çамрăксен çак пуçарăвне ырласа, комсомолăн обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи Центральный Комитечĕсене комсомолăн Мускав, Тамбов, Курск тата ытти облаçсенчи организацийĕсен пуçарăвне анлăн сарма хушнă. (ТАСС).

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Советĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ, промышленноçăн пĕр отраслĕн заказĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен заводсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод уйрăмах лайăх ĕçленине палăртнă

Малта пыракан фронтовой бригадăна ВЛКСМ Обкомĕн Хĕрлĕ ялавне панă

Республикăри предприятисенче темиçе уйăх каярах фронтовой бригадăсен социализмлă ăмăртăвĕ пуçланчĕ. Çак ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, нумай бригадăсем çитĕнӳсем турĕç.

Нумай пулмасть ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ фронтовой бригадăсен ăмăртăвĕн август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухрĕ. Ăмăртура Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри Мария тата Елизавета Филиппова юлташсен бригади мала тухнă. Вăл бригадăна ВЛКСМ Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Çавăн пекех ВЛКСМ Обкомĕ çав заводри Романовская, Скубнова, Солдатина тата Башмачникова юлташсем ертсе пыракан фронтовой бригадăсем лайăх ĕçленине палăртнă. Çав бригадăсем кашниех нормăна 250 процент ытла тултарнă.

Сентябрĕн 24-мĕшĕнче, ăмăртура мала тухнă фронтовой бригадăна ВЛКСМ Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă ятпа, вăл бригада ĕçлекен цехра митинг пулса иртрĕ. Митингра тухса каланă стахановкăсем малашне те тухăçлăн ĕçлесе Хĕрлĕ ялава алăра çирĕп тытса тăма сăмах пачĕç.

Е. ОГОРОДНИКОВА.

Хĕрӳллĕ ĕçре

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Ильич ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерӳсем туни çине ответлесе, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем кăçхине уйăх çуттипе кĕлте кӳреççĕ, анăн çапаççĕ. Колхоз председателĕ И. Федоров юлташ çунта ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Сентябрĕн 17-мĕшĕнче колхоз çĕрулми кăларса пĕтерчĕ. Кантăра татса шыва хутнă. Государство умĕнчи пур парăмсене те парса татнă. Ку колхоз тепĕр икĕ кунтан кĕрхи çĕртме туса пĕтерет. Авăн çапас ĕç те пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать.

С. ШАДИН.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Пурăнмалли çуртйĕр тата коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, çуртйĕр тата коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсен август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Çĕмĕрлери коммунальнăй прачечнăй, Шупашкарти коммунальнăй парикмахерскисен хуçалăхĕ, Шупашкар хулинчи çуртйĕр управленийĕ, Улатăрти коммунальнăй парикмахерскисен хуçалăхĕ, Çĕмĕрлери коммунальнăй парикмахерскисен хуçалăхĕ мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Çĕмĕрлери коммунальнăй прачечнăйрах (директорĕ Клибышев юлташ, горкомхоз заведующийĕ Аншиков юлташ) хăвармалла тунă тата ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Ăмăртура палăрнă работниксене премилеме Шупашкар хулинчи çуртйĕр управленине (начальникĕ Локшин юлташ) пĕрремĕш преми—3 пин тенкĕ, Çĕмĕрлери коммунальнăй парикмахерскисен хуçалăхне (директорĕ Клибышев юлташ) пĕрремĕш преми—3 пин тенкĕ, Шупашкарти коммунальнăй парикмахерскисен хуçалăхне (заведующийĕ Кигал юлташ) иккĕмĕш преми—2 пин тенкĕ тата Улатăрти коммунальнăй парикмахерскисен хуçалăхне (заведующийĕ Цукерман юлташ) иккĕмĕш премми—2 пин тенкĕ пама йышăннă.

Совнарком, Етĕрне горисполкомĕн председателĕ Вяткин юлташ тата Сĕнтĕрвăрри горисполкомĕн председателĕ Жирнов юлташ çуртйĕр тата коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсене начар ертсе пынине палăртса, вĕсене предприятисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушса хăварнă.

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейи

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ СССР Наркомфинне çак çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине туса ирттерме ирĕк панă. Лотерея сумми 2.500 миллион тенкĕлĕх пулать. Çав сумма чухлĕ 25-шер тенкĕлĕх билетсем туса кăлараççĕ.

Лотерейăра 2.500 пин выляв, пурĕ 500 миллион тенкĕлĕх вылявĕ пулаççĕ. Япалаллă выляврă каракультен, çăм пусмаран çĕленĕ, хура хăмăр тилĕ тирĕнчен тунă воротниклĕ хĕрарăм пальтисем, ылттăн тата кĕмĕл сехетсем, арçынпа хĕрарăм костюмĕсем, костюм е кĕпе çĕлемелли пусмасем, жакетсем, коверсем, тĕрлĕ вороткиксем тата ытти япаласем те пулаççĕ. (ТАСС)

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăх

Етĕрне районĕ хыççăн Вăрнар районĕ те государствăна тырă парса татрĕ

Малта пыракансемпе танлашса, государствăна тырă памалли çулталăкри плана хăвăрт пурнăçлăр!

ВКП(б) Обкомĕн секретарьне ЧАРЫКОВ юлташа

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председательне МАТВЕЕВ юлташа

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи колхозсем государствăна тырă памалли 1943 çулхи плана пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç. Государствăна тырă парас ĕç малалла та пулса пырать.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ **КОРОТКОВ**,
Наркомзагăн районри уполномоченнăйĕ **СИДОРОВ**,
Хатĕрлев пункчĕн директорĕ **КЛИМОШЕВ**.

Çулпуç умĕнче тупа тунине пурнăçа кĕртрĕмĕр

ВĂРНАР, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Уйăх çурă каярах пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташа çакăн пек тупа туса сăмах пачĕç: вĕсем кăçалхи вăйлă тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме, государствăна обязательствăсем тăрăх тырă памалли, МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тӳлемелли тата Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне хывмалли плана октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурнăça кĕртме пулчĕç.

Çулпуçа тупа туса панă сăмаха эпир пурнăçа кĕртрĕмĕр. Совет хулисемпе ялĕсене, пĕрин хыççăн теприне, нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Вăрнар районĕнчи колхозниксем вăйлă тырпул туса илсе ăнăçлăн пухса кĕртрĕç. Районри 20 колхоз—Анаткас Хапăсри, Хура Çырмари, Çĕн Алтăшри, Хирпуçĕнчи, Уравăшри колхозсем т. ыт. те гектартан 100-шер пăт е ытларах та тырпул туса илчĕç.

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче — хамăр обязательство тăрăх йышăннă срокран пĕр уйăха яхăн малтан,—районри колхозсем государствăна тырă парса татрĕç. Тырпул парас ĕç малалла пырать.

Наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшма тăрăшса, районри колхозниксемпе колхозницăсем фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăхра мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлессишĕн, ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли мĕнпур плансене срокчен пурнăçа кĕртессишĕн, колхоз фермисене хĕле кăтартуллăн хатĕрлесе çитерессишĕн çĕнĕ вăй-хăватпа кĕрешеççĕ.

С. КОРОТКОВ,
ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ.

Выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленеççĕ

ШĂХАСАН. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракан колхозсенчен пĕри пулса тăрать. Колхоз кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă. Унта выльăхсене лайăх пăхса усраççĕ. Сурăхсене пăхакансем В. Степанова, Е. Кашина тата Васильева юлташсем кăçал кашни сурăхран икĕ путек илнĕ. Путексем пурте лайăх ӳсеççĕ.

Çавăн пекех сыснасем пăхнă çĕрте ĕçлекенсем те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем 16 сысна аминчен 164 çурă илнĕ. Сысна çурисем сутса колхоз чылай тупăш илчĕ.

Фермăра ĕçлекенсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма 3 сысна, 3 сурăх ӳстерсе панă. Халĕ тата 6 сысна, 2 сурăх ӳстереççĕ. Вĕсене уйрăм çуртсенче лайăхрах çитерсе çитĕнтереççĕ.

Фермăсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе нумай ĕçсем тунă. Витесемпе выльăх çурчĕсене известь шывĕпе шуратнă, вĕсен урайĕсене тикĕслесе якатнă, шăтăк-çурăксене питĕрнĕ. Халĕ колхозниксем, республикăри фронтовой уйăхлăха хутшăнса, хĕле хатĕрленес ĕçсене çывăх вăхăтрах туса пĕтерессишĕн, выльăхсем валли апатсем кирлĕ чухлех хатĕрлессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

С. АСЛАН.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кĕчкей ялсоветĕнчи «Красный Корт» колхоз (председателĕ Х. Волков юлташ) çитес хĕле лайăх хатĕрленет. Çак кунсенче 30 пуç сысна вырнаçмалăх çĕнĕ вите туса пĕтернĕ. 20 тонна çĕрулми хумалăх нӳхреп тунă. Колхозри выльăхсен пур витисене те юсанă. Хĕле çителĕклĕ таран выльăх апачĕ хатĕрленĕ

Н. АНДРЕЕВ.

ТЫРПУЛ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇА КĔРТЕССИШĔН ТАТА СТАЛИН ЮЛТАША ПУРИНЧЕН МАЛТАН РАПОРТ ПАМА ПРАВО ИЛЕССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУÇЛАННĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ СЕНТЯБРĔН 25-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăннă
Етĕрне	1
Вăрнар	2
Шупашкар	3
Сĕнтĕрвăрри	4
Канаш	5
Советски	6
Калинино	7
Сĕнтĕр	8
Вăрмар	9
Октябрьски	10
Çĕрпӳ	11
Шăхасан	12
Куславкка	13
Элĕк	14
Красноармейски	15
Йĕпреç	16
Иншлей	17
Улатăр	18
Тăвай	19
Çĕмĕрле	20
Комсомольски	21
Хĕрлĕ Чутай	22
Елчĕк	23
Кувакино	24
Первомайски	25
Чкаловски	26
Шăмăршă	27
Пăрачкав	28

* * *

Социализмлă ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă Етĕрне районĕ государствăна тырă памалли 1943 çулхи плана сентябрĕн 24-мĕшĕ тĕлне пурнăçларĕ. Ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăннă Вăрнар районĕ государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне пурнăçларĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

Сентябрĕн 24-мĕшĕнче Вăрмарти спортинвентарь фабрикин рабочийĕсемпе инженерла-техникла работникĕсен пухăвĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăланисене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене панă.

Грамотăсене Вăрмарти спортинвентарь фабрикин производство заданийĕсене пурнăçланă чухне ăнăçусем тунă çак рабочийĕсемпе инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникĕсем илнĕ: торцовщица М. А. Андреева, электромонтер И. А. Афанасьев, столярно-сборочнăй цехăн старши мастерĕ М. В. Васильев, фабрика директорĕ И. Ф. Горбунов, работница С. Е. Елизарова, сборочнăй цехăн столярĕ Н. К. Кириллова, работница К. К. Кузьмина, сборочнăй цехăн столярĕ К. М. Матвеева, работница А. М. Михайлова, йывăça механикăлла майпа ĕçлес ĕçĕн техноручĕ М. Н. Николаев, механически цехăн старши мастерĕ А. С. Сергеев илнĕ.

Хисеплĕ грамотăсем илнисен ячĕпе фабрика директорĕ И. Ф. Горбунов юлташ сăмах тухса каланă.

Унтан грамотăсене Вăрмар станцинчи вăя шеллемесĕр ĕçленĕшĕн наградăланă стрелочниксем—П. К. Кириллов, А. М. Максимов, А. С. Степанова илнĕ.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ Хисеплĕ грамотăсем илнисене саламласа, вĕсене ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнсе сăмах каланă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂРАН

ХĔВЕЛАНĂÇ фронтĕнчи çарсем, наступлени туса пырса, ДНЕПР шывĕ урлă ăнăçлăн каçнă та вăйлăн çапăçнă хыççăн сентябрĕн 25-мĕшĕнче область центрне—СМОЛЕНСК хулине—штурмласа тытса илнĕ. Паянах пирĕн Хĕвеланăç фронтĕнчи çарсем икĕ кун хушши çапăçнă хыççăн тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та РОСЛАВЛЬ хулине пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ.

ДНЕПРОПЕТРОВСК енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Днепропетровск облаçĕнчи ПЕТРИКОВКА ятлă район центрне, çавăн пекех тата ПРОДАНОВКА, ГАЛУШКОВКА, ЛОБОЙКОВКА, КОЛХОЗОВКА, ЕЛИЗАВЕТОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

КРЕМЕНЧУГ енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, КОБЕЛЯКИ хулине, Полтава облаçĕнчи ОБОЛОНЬ тата СЕМЕНОВКА ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 120 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра БИЛЯКИ, РАДОЛОВКА, ЗУБАНИ, ПОДГОРЬЕ, ОСТАПЬЕ, СУХОРАБОВКА, МИХНЕВКА, ГОРБ, ШАМРАЕВКА, ПОПОВО, МАРЯНОВКА, МАРКОВКА, БРИГАДИРОВКА, КАСЬЯНЫ, БЕРЕЖНОВКА, ПЕСИГОЛОВЦЫ, ГАРБУЗОВКА ятлă пысăк пунктсене тата ВЕСЕЛЫЙ ПОДОЛ, КОБЕЛЯКИ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, БРОВАРЫ хулине тытса илнĕ.

ГОМЕЛЬ енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, КЛИНЦЫ хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 350 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ОВЧИНЕЦ, ЖЕМЕРДЕЕВКА, КУЛАГИ, ГНИЛУША, ТУЛУКОВЩИНА, ЧЕРТОВИЦЫ, ЗАЙМИЩЕ, БЕЛЫЙ КОЛОДЕЗЬ, МАНЮКИ, ЗАМЫШЕВО, РЫЛОВИЧИ, ДЕМЕНКА, ДУБРОВКА, БОЛЬШИЕ ЩЕРБИНИЧИ, ПЕТРЯТИНКИ, ЧУРОВИЧИ, СТАРЫЕ ЮРКОВИЧИ, ЛЕНИНО, КРУГОВЕЦ, ЛЕМЕШЕВКА, АНДРЕЕВКА, ХОТИВЛЯ, ДРОЗДОВИЦЫ, ЛЮТЕЖ, НЕВКЛЯ, БУРОВКА, БУЯНКИ, ГОЛУБИЧИ, СУЛИЧЕВКА, ПАВЛОВКА, НЕКШУМОВКА ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Пирĕн СМОЛЕНСКРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем 4 километртан пуçласа 6 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ДУБРОВКА, СУХОНЯТЫ, ЯНВИЩЕ, ХОЛМ, БЕРЕСТЯНКА, БАБНИ, ПЕНИСНАР, РОГУЛИНО ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Сентябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 58 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 49 самолетне персе ӳкернĕ.

СЕНТЯБРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче КУБАНЬРЕ пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, ПИЛЕНКОВО, ДЖИГИНСКОЕ, СУВОРОВСКО-ЧЕРКЕССКИЙ АУЛ, БЛАГОВЕЩЕНСКАЯ ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.

ДНЕПРОПЕТРОВСК енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче ДНЕПР шывĕн хĕррине çитнĕ.

КРЕМЕНЧУГ енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ГОРОШИНО, БОЛЬШАЯ БУРОМКА, БОЛЬШИЕ КРЫНКИ, МАЛЫЕ КРЫНКИ, ГЛУШКОВО, ВЕРХНЯЯ МАНУЙЛОВКА, НИЖНЯЯ МАНУЙЛОВКА, ЧЕНАКАЛИВКА, НЕНАДИХА-ПАВЛОВКА, ЛУТОВИНОВКА ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ, вара уйрăм участоксенче ДНЕПР шывĕн хĕррине тухнă.

КИЕВ енче пирĕн çарсем, наступлени туса çапăçса, уйрăм участоксенче ДНЕПР шывĕн хĕррине тухнă.

ГОМЕЛЬ енче пирĕн çарсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, 12 километртан пуçласа 18 километр таран малалла куçнă, СУРАЖ хулине, НОВОЗЫБКОВ хулипе чугун çул узелне, ЗЛЫНКА хулине, ЧЕРНИГОВ облаçĕнчи РЕПКИ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра БОТАЕВО, СЕЛЕЦКОЕ, ДУШАТИН, ГУДОВКА, ГРАФОВКА, ДАНИЛОВКА, ФЕДОРОВКА, ЧЕРНОРУЧЕЙ, ВЕЛИКИЙ БОР, ГУТА-КОРЕЦКАЯ, ВЕПРИН, ВНУКОВИЧИ, ШЕЛОМЫ, НОВОЕ МЕСТО, МАЛЫЙ ВЫШКОВ, ДЕНИСКОВИЧИ, ЛЫСЫЕ, ПЛУТОВКА, ДЕРЕВИНЫ, ПЕРЕПИС, ИЛЬМОВКА, ВЛАДИМИРОВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, АННОВКА, ДАНИЧИ, УБЕЖИЧИ, ПЕТРУШИ, ЗУБАХИ, ДУХОВЩИНА ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

МОГИЛЕВ енче пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă, 15 километртан пуçласа 25 километр таран малалла куçса, Смоленск облаçĕнчи МОНАСТЫРЩИНА, СТОДОЛИЩЕ тата ЕРШИЧИ ятлă район центрĕсене, Могилев облаçĕнчи ХОТИМСК ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 250 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра МИЛЯВИЦА, ЛИТВИНОВКА, ТРОСТЯНКА, СЛОБОДА, ЩЕМИЛОВКА, ВЛАСКОВО, ЦЫГАНОВКА (Рославль хулинчен 20 километр хĕвеланăçнерехре), ГНЕВКОВО, ПУСТОСЕЛ, КРИВОЛЕС, ДУБРОВКА, ПУСТАЯ БУДА, ЛОМНЯ, СТАРИНА, ВАСИЛЬЕВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем наступлени туса пырса çапăçнă, уйрăм участоксенче 6 километртан пуçласа 11 километр таран малалла куçса, Смоленск облаçĕнчи КАСПЛЯ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ДАРОВАЯ, БИЛЯТЫ, 1-МĔШ ХОЛМЫ, БУДНИЦА, ПУНИЩИ, СЕМЕНОВО, БОЛЬШИЕ ЖАРЫ, МАЛЫЕ ЖАРЫ, АГАПОНОВО, КАМЕНКА, МАМЛЕНКИ, ЖЕЛОМЕЦ, ГНЕЗДОВО, СОФЬИНО, БУБЛЕВЩИНА, ЛЕДОХОВО, ДОМАРАЦКИЙ, УСОХИ, КУЗНЕЦОВО ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Сентябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 40 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 28 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Кубаньре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Тăшман, вăйлăн персе тăрса тата контратакăсем туса, пирĕн наступлени туса пыракан чаçсене чарма хăтланнă, анчах та унăн ĕçĕсем ăнăçман. Совет çарĕсем тăшманăн персе тăракан точкисене пусарса лартнă та, малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр чаçри боецсем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ чухне 200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 9 тупă, 46 пулемет, 30 автомашина тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр чаçĕ тинĕс пехотин подразделенийĕсемпе пĕрле вăйлăн çапăçнă хыççăн Благовещенская ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта тытса илнĕ. Çак пунктшăн çапăçнă чухне гитлеровецсене пĕр батальон таран пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче 12 танк пур.

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ тăшманăн десант антармалли хăвăрт çӳрекен 11 баржине, тиĕ грузпа çӳрекен 3 баржине тата 5 понтонне шыва путарнă. Сывлăшри çапăçусенче кун каçа нимĕçсен 10 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Днепропетровск енче тăшман, инженерла вăйлă сооруженисемпе усă курса, хаяррăн хирĕç тăнă. Пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсен оборонине татнă та вĕсен вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсене чылайĕшне тытса илнĕ. Гитлеровецсем, çав позицисене каялла тытса илме хăтланса, умлăхыççăн вунă контратака ытла тунă. Контратакăсем вăхăтĕнче штык вĕççĕн те çапăçнă. Пирĕн боецсем тăшманăн 1000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ, тăшмана каялла ывăтса янă.

* * *

Кременчуг енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, тăшманăн аркатса тăкнă чаçĕсен юлашкийĕсене Днепр шывне хăваласа кĕртнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 600 вилли ытла выртса юлнă. Унсăр пуçне тата нумай нимĕç шыва путса вилнĕ. Нимĕçсен 14 туппине тата васкаса каялла чакнипе пăрахса хăварнă ытти хĕçпăшалне нумай тытса илнĕ.

* * *

Киев енче тăшман, çапăçăва хăйĕн пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене кĕрте-кĕрте ярса, ĕнер Бровары хули районĕнче хăйĕн çухатнă позицийĕсене каялла тытса илме хăтланнă. Пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсен пур контратакисене те сирсе янă та çĕнĕрен малалла куçнă. Кун каçиччен нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, вĕсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Переяслав хулинчен кăнтăрарахра пирĕн çарсем Днепр патнелле куçса пынă чухне вĕсене тăшман çарĕсен пĕр ушкăнĕ хирĕç тăнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн çав ушкăнне аркатса тăкнă, унăн юлашкийĕсене шыв хĕррине хĕссе лартнă. Хаяррăн çапăçса, пирĕн боецсем хирĕç тăнă гитлеровецсене пурне те пĕтерсе тăкнă, хĕçпăшалĕсене пăрахнисене—200 нимĕçе ытла—тыткăна илнĕ.

* * *

Гомель енче пирĕн çарсем, татăклă атака туса, Новозыбков хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ. Унтан, тăшмана сывлăш çавăрса илме памасăр, совет боецĕсем питех те хăвăрттăн малалла кайнă та, Орел облаçĕнчи район центрне—Злынка хулине тытса илнĕ. Çав çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсен 1800 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Нумай хĕçпăшал, боеприпассен 4 складне, 2 тырă складне, 2 продовольстви складне, атă, горючи тата сĕрмелли япаласен склачĕсене тата çар техники тиенĕ 2 чугун çул эшелонне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, малалла куçнă, Чернигов облаçĕнчи Репки ятлă район центрне тата халăх пурăнакан ытти нумай пунктсене тытса илнĕ.

* * *

Могилев енче пирĕн çарсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, Белорусси республикин территорине кĕрсе кайнă. Пĕр соединени чаçĕсем Могилев облаçĕнчи район центрне—Хотимск хулине тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем Орел облаçĕнчи район центрне—Сураж хулине тытса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 17 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă тата тăшман пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн чаçсем нимĕçсенчен 20 тупă, ултă кĕпçеллĕ 6 миномет, боеприпассен темиçе складне тата çар пурлăхĕ тиенĕ 7 поезда тытса илнĕ. 80 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Витебск енче пирĕн çарсем наступлени туса пырса çапăçнă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Пĕр соединени чаçĕсем çапăçса Вихра шывĕ урлă каçса кайнă. Пирĕн тепĕр чаçри боецсем Остер шывĕ патне пырса тухнă та, унăн хĕвеланăç хĕррине каçса кайса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Смоленскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем Смоленск облаçĕнчи Каспля ятлă район центрне тытса илнĕ. Касплян шăн пынă çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 16 тупă, 37 автомашина тата çар япалисен темиçе складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Барановичи облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки 5 кун хушшинче нимĕçсен 3 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă, вĕсенчен пĕр эшелонĕ танксем турттарса пыраканскер пулнă. Çав крушенисенче 3 паровоз, 37 вагон тата 13 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ пысăк чугун çул станцине пырса кĕнĕ те депона тата 2 паровоза сирпĕнтерсе янă.

* * *

Румынсен 4-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне каçнă ефрейтор Георге Т. çапла каласа панă: «Август уйăхĕн варринче пирĕн дивизие Крымран Новороссийск районне илсе килчĕç. Тĕрлĕ ротăсемпе батальонсенчен мĕн пурĕ 200 салтак Керчь проливĕ урлă каçма пачах та килĕшмерĕç. Вĕсем çапла каларĕç: «Пире хуть те мĕн тăвăр, анчах та эпир текех вăрçмастпăр»,—терĕç. Нимĕç командованийĕ, дивизири хумханусем çинчен пĕлсенех, Румыни офицерĕсене «бунтовщиксене» хирĕç çивĕч мерăсем йышăнма хушнă. Эпир тăракан вырăна вара часах нимĕç автоматчикĕсен отрячĕ килчĕ. Нимĕçсем Тамань çурутравĕ çине кайма килĕшмен салтаксене тытма пуçларĕç. Гитлеровецсем салтаксене нумайĕшне тата хăшпĕр румын офицерĕсене арестлерĕç те таçта илсе кайрĕç».

Пирĕн агитколлектив

ИШЛЕЙ. Мамăш ялсоветĕнче 23 çынтан агитколлектив организациленĕ. Унта коммунистсемпе комсомолецсем тата колхоз активисчĕсем пĕрлешсе тăраççĕ.

Тырă вырма тухиччен агитаторсемпе семинар туса ирттертĕмĕр. Унта кашни агитатора бригадăсемпе звеносем çумне çирĕплетрĕмĕр. Вĕсене агитколлективăн уборка вăхăтĕнчи ĕçĕсем çинчен каласа патăмăр. Пирĕн агитаторсемпе вулавçăсем колхозниксем каннă вăхăтра докладсем, калаçусем туса ирттереççĕ. Уйрăмăнах партипе правительство йышăннă постановленисене кашни колхозника ăнлантарса парас сишĕн активлăн ĕçлеççĕ.

«17 партсъезд» колхозра (председателĕ К. Романов) агитатор пулса ялсовет исполкомĕн депутачĕ К. Смирнов юлташ ĕçлет. Вăл агитаци ĕçне анлăн туса пынипе пĕрлех, ĕçре пример кăтартса пычĕ. Çавна кура колхозра ăмăрту ĕçĕ анлăн саралчĕ. Пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç. Н. Кузьмина, М. Дукашова колхозницăсем кулленхи нормăна 150—180-шар процент тултарса пычĕç. Çапла вара колхоз кĕртыррисене ялсоветĕнчи ытти колхозсенчен 3 кун малтан (8 ĕç кунĕнче) вырса пĕтерчĕ.

«Коммунист» колхозра Н. Иванова, С. Смирнова, Я. Иванова агитаторсем ĕç дисциплинине çирĕплетме, колхозниксене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухма пулăшрĕç. Пĕтĕмпе 18 хутчен калаçу туса ирттернĕ. Тырă вырма тухсанах ĕçе кая юлса тухакансем пулчĕç. Агитаторсем ăнлантарнă хыççăн колхозниксем кашниех ĕçе ир-ирех тухса каçченех ĕçлеме тытăнчĕç. А. Белова, Е. Новикова, А. Кириллова, А. Смелова колхозницăсем, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, нормăна куллен 170—200-шер процент тултарса вырчĕç. Вĕсем пурте фронтовиксен арăмĕсем. Çапла ĕçленипе колхоз кĕртыррисене иртнĕ çулхинчен 3 кун малтан пухса кĕртрĕ.

Тырă вырнă вăхăтра агитколлектив тăрăшнипе колхозсенче тата бригадăсенче стена хаçачĕсене йĕркеллĕ кăларса пытăмăр. Стена хаçатне вăхăтра кăларса пыни колхозри ĕç тухăçлăхне ӳстерчĕ. Хăшпĕр бригадăсенче ыраш вырнă çĕрте тăккаланчăксем нумай пулнă, кĕлтесене япăх сыхнă тата ытти те. Стена хаçачĕ çав çитменлĕхсене пĕтерме пулăшрĕ.

Пирĕн агитколлектив Чурачăк ялсоветĕнчи агитколлективпа ăмăртса ĕçлет. Çавăнпа та кашни агитатор хăй ĕçне чыслăн туса пыма тăрăшать.

П. РЫКОВ,
Ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Комсомолецсем уборкăра активлăн ĕçлерĕç

ШАХАСАН. Комсомолăн Вăтакас Кипечри «Память Ильича» колхозри пуçламĕш организацийĕ кăçал уборкăра лайăх ĕçлерĕ. Комсомолецсем пур ĕçсене те активлăн хутшăнаççĕ. Уборка вăхăтĕнче пĕр комсомолец та ĕçе тухмасăр юлман. Вĕсем колхозниксемпе пĕрле ĕçленĕ хушăрах политикăллă-массăллă ĕçе те ертсе пычĕç. Вулав çурчĕн заведующийĕ Ф. Пахомов юлташ колхозниксене кашни кунах Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене ăнлантарса пачĕ.

Пирĕн дисциплина çирĕп. Уборка вăхăтĕнче те эпир кашни эрнерех комсомолецсен пухăвĕсене ирттертĕмĕр. Комсомолецсен ĕçри активлăхĕ ӳссех пырать.

А. ФЕДОРОВ,
ВЛКСМ пуçламĕш организацийĕн секретарĕ.

«Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен сывлăхне сыхлама

Элĕк районĕнчи Чăваш Сорăм ялсоветне кĕрекен колхоз членĕсем, Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă тумтирсем пухнисĕр пуçне тата вĕсен сывлăхне сыхламалли фонда ялхуçалăх продукчĕсем пама тытăнчĕç. «Серп и молот» колхоз членĕсем пĕр кун хушшинче 400 çăмарта тата 3 килограмм çу пухрĕç. Варвара Осипова, Иван Трофимов, Иван Давыдов тата Тормидонов колхозниксем кашниех 400-шер грамм çу, 10-шар çăмарта пачĕç.

«Красный пахарь» колхоз тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен сывлăхне сыхламалли фонда 200 çăмарта, 300 литр сĕт, Панкли ялсоветĕнчи Ульянов ячĕпе тăракан колхоз 16 килограмм çу пачĕç.

Х. ЛИСИН.

Союзлă çĕршывсен вăрçăпа политика комиссине тăвасси çинчен

Çак çулхи августпа сентябрь уйăхĕсенче Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин правительствисем калаçса татăлнă тăрăх, çарпа политика комиссийĕ туса хунă. Çав комиссие США, Великобритани тата СССР правительствисен представителĕсем кĕреççĕ тата Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн представителĕ хутшăнать.

Вăрçăпа политика комиссийĕ хăйĕн ĕçĕсене малтанлăха Алжир хулинче туса тăрать. Вăл чи малтан Италипе тунă мир условийĕсемпе сыхăнса тăракан ыйтусене тата çав условисене пурнăçа кĕртнине контроллесе тăрас ыйтусене пăхса тухать тата вăл тăшмантан ирĕке кăларакан территорисенче тухса тăракан çавăн пек ыйтусене сӳтсе-явать.

Совет правительстви вăрçăпа политика комиссийĕн представителĕ пулма СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместительне, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместительне А. Я. Вышинский юлташа уйăрса лартнă. Британи правительствин представителĕ пулма парламент членне—колонисен министрне Гарольд Мак-Миллан господина уйăрнă. Часах Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви тата француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет та хăйсен представителĕсене уйăрса лартаççĕ.

Наркоминделăн Информаци Бюровĕ.

Ют çĕршывсенче

Пĕрлешӳллĕ нацисене пулăшса ура çине тăратакан администраци тăвасси çинчен çĕнĕрен пăхса тухса улăштарнă килĕшĕвĕн проектне пичетлесе кăларни

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Государство департаменчĕ пĕрлешӳллĕ нацисене пулăшса ура çине тăратакан администраци тăвасси çинчен çĕнĕрен пăхса тухса улăштарнă килĕшĕвĕн проектне пичетлесе кăларнă. Вăл çапла пĕлтернĕ: çак проекта интересленекен пур çĕршывсен правительствисене те тата француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета та панă, тенĕ.

ХЭЛЛ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государственнăй секретарĕ Хэлл пресс-конференцире çапла каланă: США правительстви интересленекен правительствăсенчен тата француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетран вĕсем пĕрлешӳллĕ нацисене пулăшса ура çине тăратакан администраци тăвасси çинчен çĕнĕрен пăхса тухса улăштарнă килĕшĕвĕн проектне алă пусма хатĕррипе хатĕр марри çинчен ыйтрĕ. США правительстви, тенĕ Хэлл, çав килĕшĕве алă пусма хатĕр. США правительстви çав килĕшĕве алă пусасси Шурă Çуртра ноябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче пулса ирттĕр тесе сунать. Тата США çĕнĕ организаци совечĕн пĕрремĕш ларăвне çав килĕшĕве алă пуснă хыççăнах ăçта та пулин Вашингтон сывăхĕнче туса ирттерме сунать.

Хэлл çакна палăртса каланă: пĕрлешӳллĕ нацисем вăрçăран сиен курнă çĕршывсене пулăшса ура çине тăратас ĕçе питех те лайăх организацилес ыйтăва пысăк вырăна хураççĕ, тенĕ. Малалла Хэлл çапла каланă: пĕрлешӳллĕ нацисем килĕшĕвĕн çĕнĕ проекчĕпе пурте çырлахаççĕ пулмалла. Тăватă аслă держава ăна ырланă та ĕнтĕ. Килĕшӳ ыйтăвĕсем тăрăх калаçусем пĕр çул хушши пынă, çавăнпа та, Хэлл шухăшĕпе, малтанлăха тăвакан пĕтĕмĕшле конференци кирлĕ те пулмасть.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Альтамура хулине тытса илнĕ.

Неапольте лару-тăру питĕ çивĕчленсе çитнĕ. Нимĕçсем хулари халăха хирĕç çăмăл артиллерипе тата танксемпе усă кураççĕ, анчах та халăх нимĕçсемпе кĕрешме чарăнмасть.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсене, унăн транспорчĕпе çулйĕрĕсене çаплах хаяррăн пырапыра тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ИТАЛИРИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: сентябрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен бомбардировщикĕсем Неапольтен хĕвелтухăçнерехри Беневенто тата Авеллино хулисен районĕсенче тăшманăн çулсен узелĕсемпе лагерĕсене атакăланă. Ĕнер йывăр бомбардировщиксем Бреннер ту каççинчен кăнтăралларахра ларакан Больцано хулине, çавăн пекех тата Веронăпа Болонья хулисене тапăннă. Сентябрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Неапольтен çурçĕреллерехре ларакан Формия хули сывăхĕнчи çулсем çине бомбăсем пăрахнă.

США-ра август уйăхĕнче мĕн чухлĕ хĕçпăшал туса кăларнă

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи август уйăхĕнче США-ра 7.612 самолет туса кăларнă. Производство ӳссе пырать пулсан та, США палăртса хунă плана, пуринчен ытла йывăр самолетсем туса кăларас тĕлĕшпе, пурнăçа кĕртеймен-ха.

Август уйăхĕнче тинĕс-çар суднисем иртнĕ уйăхрисенчен ытларах туса кăларнă. Август уйăхĕнче туса кăларнă тинĕс-çар суднисен пĕтĕм тоннажĕ 284.000 тонна пулать, вăл июль уйăхĕнче туса кăларнинчен 40 процент ытларах пулать.

Август уйăхĕнче, июль уйăхĕпе танлаштарсан, хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем 32 процент, зенитнăй тупăсем 4 процент, пĕчĕк калибрлă хĕçпăшалпа пехота хĕçпăшалне 5 процент, моторизованнăй транспорт 10 процент, сыхăну çарĕсен оборудованине 30 процент ытларах туса кăларнă.

Промышленность предприятийĕсемпе базисем тумалли плана 76 процент пурнăçланă ĕнтĕ.

КОРСИКА ÇИНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, французсен яланхи çарĕсемпе партизансен чаçĕсем нимĕçсене çаплах çурçĕрелле хĕссе пыраççĕ. Бонифачо тата Порто-Веккьо хулисене йышăнса илнĕ. Çурçĕрте нимĕçсем Мурато тата Сан-Стефано хулисенчен тухса кайнă. Фавонра француз çарĕсем нимĕçсене йывăр çухатусем кӳнĕ, вара гитлеровецсем васкаса каялла чакнă.

Жиро генерал каланă тăрăх, утрав çинчи вăрçă 10—15 кун хушшинче пĕтмелле.

ЛОНДОН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ çĕрле Корсика сыранĕсем патĕнче тăшманăн 19 транспортнăй самолетне персе ӳкернĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăпа Франци çарĕсем Басти сывăхĕнче аннă. Франци чаçĕсем халĕ портран 8 мильăра кăна тăраççĕ.

Корсика çинче халĕ Италин 80.000 салтакĕ тăрать, вĕсем Мальи генерала пăхăнса тăраççĕ. Вĕсем, Мальи генерал йышăннă условисем тăрăх, Сардинине, Сицилие тата кăнтăр Италие тухса кайма хатĕрленсе тăраççĕ.

Юлашки ултă уйăх хушшинче Корсика çинчи партизансем пĕрмаях винтовкăсем, пулеметсем тата автоматсем илсе тăнă. Партизансене çав хĕçпăшала подводнăй лодкăсемпе пыра-пыра панă е самолетсем çинчен парашютпа пăрахса панă. Çапла майпа Корсика çинче 10 пинтен пуçласа 12 пин француз патриотне хĕçпăшаллантарнă.

УЭЛЛЕС ОТСТАВКĂНА ТУХНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ каланă тăрăх, Рузвельт Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес отставкăна тухни çинчен пĕлтерет. Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ пулма хĕçпăшала кивçен е арендăна йĕркипе памалли закона пурнăçа кĕртсе тынине тĕрĕслесе тăракан уполномоченнăя Стеттиниуса лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти арман комбинатне старши бухгалтер кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамĕ, 15. Телефон 2—16. 3—1

Мускаври 2-мĕш №-лĕ Витамин завочĕн Заготконторине шăлан çырли тĕлĕшпе ĕçлекен заготовительсем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Заводская, 43. Телефон 6—84.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1836

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. 4